(cc) BY

Александрова Наталия Николаевна

учитель

МБОУ «Хормалинская СОШ»

с. Хормалы, Чувашская Республика

ТЕСТ – АЧАСЕН ПĔЛĔВНЕ ТĔРĔСЛЕМЕЛЛИ ТУХĂÇЛĂ МЕЛ

Аннотаци: *ĕçре чăваш литературинче вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕслеме тата çирĕплетме тест ыйтăвĕсене усă курнине пăхса тухнă. Тестсемпе усă курнин кирлĕлĕхне никĕсленĕ: вĕсем пуçламăш пĕлӳ шайне хăвăрт хаклама, материал мĕнлерех усăннине тĕрĕслесе пыма, вĕрентекен ĕçĕн тухăçлăхне курма май параççĕ. Тестсем вĕрентекенĕн те, вĕренекенĕн те ĕçне çăмăллатаççĕ, ăс-тăн аталанăвне хистетеççĕ, шухăшлама вĕрентеççĕ, пĕлӳ туртăмне аталантараççĕ, хăйсем тĕллĕн ăс пухма пулăшаççĕ. Тестсем илемлĕ хайлава туллин тишкерме çителĕксĕр пулнине палăртнă, анчах та пулăмсене, ятсене, çыхăнусене асра хăварнине тĕрĕслеме вĕсем меллĕ. Баллсене 5 баллă виçене куçармалли системăна ăнлантарнă, хаклав çинчен сĕнӳсем панă. М. Кипекĕн «Кайăк тусĕ» повеçĕ тăрăх тунă тест тĕслĕхне кăтартнă: пролог, «Тăшмансем», «Икĕ егерь», «Çĕнĕ тĕл пулусем», «Вăрттăн сунарта», «Сунар хуçалăхĕнче», «Юлашки çапăçу» тата эпилог сыпăкĕсем тăрăх ыйтусем.*

Тĕп сăмахсем: *тест ыйтăвĕсем, чăваш литератури, пĕлĕве тĕрĕслени, хаклав, 5 баллă виçе, М. Кипек, «Кайăк тусĕ» повеç, пролог, текст тишкерĕвĕ, хăй тĕллĕн ĕçлени, ăс-тăн аталанăвĕ.*

ТЕСТ КАК ЭФФЕКТИВНЫЙ СПОСОБ ПРОВЕРКИ ЗНАНИЙ ДЕТЕЙ

Аннотация: *в работе рассматривается использование тестовых заданий как эффективного средства проверки и закрепления знаний учащихся по чувашской литературе. Обоснована актуальность применения тестов: они позволяют быстро оценить исходный уровень знаний, проследить, как усвоен материал, и увидеть результативность работы учителя. Отмечено, что тесты облегчают труд и педагога, и ученика, стимулируют интеллектуальное развитие, учат мыслить, поддерживают стремление к познанию и формируют*

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

навыки самостоятельной работы. Подчёркнуто, что тесты не заменяют полного анализа художественного текста, но удобны для проверки запоминания фактов, имён и связей. Описана система перевода баллов в пятибалльную оценку, приведены рекомендации по оцениванию. Представлен пример теста по повести М. Кипека «Кайӑк тусӗ», включающий задания по прологу, разделам «Тӑшмансем», «Икӗ егерь», «Ҫӗнӗ тӗл пулусем», «Вӑрттӑн сунарта», «Сунар хуҫалӑхӗнче», «Юлашки ҫапӑҫу» и эпилогу.

Ключевые слова: *тестовые задания, чувашская литература, проверка знаний, оценивание, пятибалльная шкала, пролог, анализ текста, самостоятельная работа, интеллектуальное развитие.*

Ку чухнехи вӗрентӳ процесӗ малаллах аталанса пынӑ май пурнӑҫ вӗрентекенсене педагогикӑпа методика ҫӗнӗлӗхӗсене куллен алла илсе пыма хушать. Вӗрентӳ ӗҫӗнче ҫыравҫӑсен пурнӑҫӗпе пултарулӑхне, хайлавсене тишкерсе пӗтӗмлетмешкӗн ачасен пӗлӗвне тӗрӗслемелли тӗрлӗ ӗҫ ирттерни пысӑк пулӑшу парать. Чи тухӑҫлӑ мелсенчен пӗри вӑл – тестсемпе ӗҫлени. Унӑн лайӑх енӗ нумай. Пӗрремӗшӗнчен, вӗсемпе усӑ курса ачасен пӗр-пӗр тема вӗренме пуҫлас умӗнхи пӗлӳ шайне кӗске вӑхӑт хушшинчех хаклама пулать. Ҫакӑ вӗрентекене класпа тата уйрӑм ачапа ӗҫлемелли тӗп ҫул-йӗре палӑртма май парать. Иккӗмӗшӗнчен, вӗренсе иртни ачасен ӑс-тӑнӗнче еплерех тытӑнса юлнине, учитель ӗҫӗн тухӑҫлӑхӗ мӗнлерех иккенне тӳрех кӑтартса парать. Виҫҫӗмӗшӗнчен, тестсемпе усӑ курса вӗрентӳҫӗсем те, вӗренекенсем те хӑйсен ӗҫне чылай ҫӑмӑллатаҫҫӗ, мӗншӗн тесен тестсенче хатӗр хуравсем пур, ҫакӑ шкул ачисене хӑйсен интеллектуаллӑ аталанӑвне ӳстерме хистет, шухӑшлама вӗрентет, вӗсен нумай пӗлес туртӑмне аталантарма пулӑшать, хӑйсем тӗллӗн ӑс пухма май парать.

Тестсем ачасен пӗлӗвне тӗрӗсленӗ чухне самай меллӗ, вӗсемпе вӗренекенсен пӗлӗвӗпе хӑнӑхӑвӗсене хӑвӑрт хаклама пулать. Паллах, тест мелӗпе этем чунне курма, вӑл илемлӗх тӗнчине мӗнле ӑнланнине туллин уҫса пама ҫук, ҫапах та вӑхӑта, пулӑмсене, ятсене, ҫыхӑнусене асра хӑварнине тестсемпе тӗрӗслеме

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

ансат. Ҫапла вара, вĕрентӳпе тĕрĕслев ĕҫĕнче тестсем хӑйсен ҫирĕп вырӑнне йышӑнчĕҫ тесе пĕтĕмлетме пулать.

Тест хуравĕсене хакласси.

Тест ĕҫне тĕрĕс хаклама – хуравласа тунӑ балл суммине 100 баллӑ системӑна куҫарсан аван. 5 баллӑ виҫене вара патшалӑхӑн перлехи экзаменĕнчи пек тытса пыма пулать: 0 – 32 балл – «2»; 33 – 50 балл – «3»; 51 – 70 балл – «4»; 71 – 100 балл – «5».

Вĕрентӳҫĕсем ҫакӑн пек хаклав виҫи сĕнеҫҫĕ. Ĕҫĕн 90 – 100 процентне тĕрĕс тунӑ пулсан «5»-пе, 76 – 89 процентне – «4»-па, 50 – 75 процентне – «3»-пе, 50 процентран сахалрах пулсан «2»-пе хакламалла. Ку хаклав виҫине норма тесе шутламалла мар. Вĕренекенсен пултарулӑхне кура балл шутне учитель хӑй тĕллĕн улӑштарма пултарать.

Литература тесчĕсем паллӑ ҫыравҫӑсен кун-ҫулĕ тата пултарулӑхĕ, тӑван литература аталанӑвĕн тапхӑрĕсем, литература ӑслӑлӑхĕн тĕп ӑнлавĕсем, чӑваш сӑмахлӑх искусствинче пысӑк вырӑн йышӑнакан хайлавсем ҫине таянса йĕркеленеҫҫĕ.

Мĕтри Кипекĕн «Кайӑк тусĕ» повеҫĕн сыпӑкĕсем тӑрах йĕркеленĕ тестсем вĕреннине аса илме, илнĕ пĕлĕве тĕрĕслеме, ҫирĕплетме тата пĕтĕмлетӳ тума кирлĕ хӑнӑху ĕҫĕсем. Ыйтусен тĕрĕс хуравĕсене шырани, вĕсене тупма пултарни вĕренекен литературӑна пĕлнин шайне кӑтартать.

Вĕренекенсен пĕлĕвне вӑхӑтра тĕрĕслесе хакланин пĕлтерĕшĕ пысӑк.

Тест.

Вуланине лайӑх астӑватӑр-и?

Пролог.

1. Хур кайӑксем ӑҫтан ӑҫталла тата мĕнле ĕмĕтпе вĕҫеҫҫĕ? Вĕсен картинче миҫе хур?

а) 23 хур, кӑнтӑрти шыв-шурсенче хĕл каҫнӑ хыҫҫӑн Ҫурҫĕрти пӑрлӑ океан патне ҫитсе ҫын ҫук тундрӑна йӑва ҫавӑрма васкаҫҫĕ;

ӑ) 13 хур, Тутар Республикинчен Чӑваш Республикине заповедника вĕҫеҫҫĕ;

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

б) 10 хур Çурçерти пăрлă океанран Африкăна апат-çимĕç шырама васкать.

2. Çавал тĕлне çитсен хур кайăксене пĕчĕк утрав мĕнпе илĕртет-ши?

а) шывра пулă нумай пулнипе;

ă) симĕслене пуçланă çерем татăкĕпе;

б) утрав çинчи симĕс пăрçа лаптăкĕпе.

3. Пĕчĕк утрав çине анма тăрсан хур кайăксемпе мĕн пулса иртет?

а) тĕмеске ăшĕнчи пăшаллă çын пĕр хурне персе вĕлерет;

ă) хурсем çине хурчка тапăнать;

б) утрав çинчи тĕмеске çунма пуçлать.

4. Сăр шывне курса савăннă хур кайăксен ĕмĕчĕ мĕншĕн пурнăçа кĕмест?

а) карта пуçĕ хур кайăксене шыв çине лартмасăрах вĕçсе иртет;

ă) унта кайăк кăвакалĕ йышлă пулнипе анса ларма вырăн пулмасть;

б) утă купи патĕнчен икĕ хутчен пăшал пенишĕн.

5. Хур кайăксем çинчен çырнă юрра палăртăр.

а) «Пилеш кайăксем»;

ă) «Хур кайăксем»;

б) «Шăпчăксем».

«Тăшмансем» сыпăк.

1. Улкаш ялĕнчи фермăра мĕнле инкек сиксе тухать?

а) сурăх фермине кашкăрсем тапăнаççĕ;

ă) фермăри сыснасене кĕçĕ чирĕ ерет;

б) ферма çумĕнчи утă купи çунса каять.

2. Фермăна миçе кашкăр кĕни председателе мĕншĕн хумхантарать?

ă) кашкăрсене тытса тирне пайлассишĕн;

ă) сурăх вилли нумаййишĕн;

б) ветеринарăн кунта чылай ĕçлеме тивнишĕн.

3. Виктор Тараев сунар ĕçне аван пĕлни ăçтан курăнать?

а) сурăх ферминче миçе тата мĕнле кашкăрсем пулнине тĕрĕс пĕлтернинчен;

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

ă) кашкăрсем мĕншĕн хăйсене кирлĕ чухлĕ кăна сурăх вĕлерменнине ăнлантарнинчен;

б) пурте тĕрĕс.

4. Сунарçăсем кашкăрсене тытас ĕçе мĕнле йĕркелеççĕ?

а) 58-мĕш квартал тавра хĕрлĕ ялав çыххисем карса тухаççĕ;

ă) кашкăрсем чарăннă вырăн таврашне сунар йыттисемпе сыхлаççĕ;

б) кашкăрсем хыççăн пăшалпа пере-пере хăвалаççĕ.

5. Сунар умĕн тата вĕçĕнче Баранов хăйĕн хĕрне каланă сăмахсем вăл мĕнле çын пулнине кăтартаççĕ?

а) ырă кăмăллă;

ă) çăткăн;

б) вĕçкĕн (çăмалттай)

«Икĕ егерь» сыпăк.

1. Тараев чăваш вăрманне кăмăллани, унăн пурнăçне лайăх пĕлни ăçтан курăнать?

а) хăш йывăçа касмаллине шутласа хунинчен;

ă) сунар станцине килнĕ хăнасене вăрманпа паллаштарса çӳренинчен;

б) чăваш вăрманĕнчи йывăççене лайăх пĕлнинчен, кашни йывăçăн чĕр чунсем хушшинче тусĕ пуррине чухланинчен;

2. Тараев çут çанталăк илемне пăсакансем чылайăшĕн пăшăрханать. Камсем-ха вĕсем?

а) сунар хуçалăхĕнче ĕçлекен егерьсем;

ă) вăрмана касса хăртакансем, ырă кайăксене хĕсĕрлекен этемсем, ăса кĕмен пĕчĕк ачасем, йытă-кушак, выльăх-чĕрлĕх, выçă куçлă сунарçăсем;

б) ӳсен-тăранпа чĕр чун тĕнчине пуянлатас текенсем.

3. Тăваттăмĕш обходра мĕн пулса иртет?

а) сунара тухнă Антонов егерьпе колхоз бухгалтерĕн шăллĕне Патмаров егерь ярса илет;

ă) Тараевпа Патмров кашкăр амине тытаççĕ;

б) Антонов егере браконьерсем амантаççĕ.

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

«Ҫĕнĕ тĕл пулусем» тата «Вăрттăн сунарта».

1. Хир чăххисем апатланакан ӳплене Тараев мĕнле тупать, унта вăл мĕн курать?

а) пĕчĕк хĕрес пек йĕрсене курса уплене кĕрет, унта мăянпа ҫул курăк вăрри сапнине асăрхать;

ă) ӳпле патĕнче тăракан ҫынсем чĕнсе илеҫҫĕ;

б) ӳпле ҫинчен Патмаров егерь каласа панипе.

2. Хир чăххисене кам апат парса тăнă? Ун ҫинчен эсир мĕн шухăшлатăр?

а) кайăксене Шатра Михала апат парса тăнă, вăл браконьер;

ă) хир чăххисене Чĕкеҫ апат парса тăнă, вăл вăрмана юратакан ҫын;

б) кайăксене Тăрна Иванĕ тăрантарса пурăнать, вăл ҫамрăк ҫын.

3. Иванăн аслашшĕпе ашшĕ кам пулнă? Иванăн ватă аслашшĕне мĕншĕн Тăрна Трахвинĕ тесе чĕннĕ?

а) аслашшĕпе ашшĕ ветеринарсем пулнă, Тăрна Трахвинĕ тесе тăрнасен тĕкне татнăшăн каланă;

ă) аслашшĕпе ашшĕ сунарҫăсем пулнă, Тăрна Трахвинĕ тесе аманнă тăрнана ҫăлса унпа туслашнăшăн каланă;

б) браконьерсем пулнă, Тăрна Трахвинĕ тесе таврари тăрнасене тытса пĕтернĕшĕн каланă.

4. Баранов ăсан туйĕпе мĕнле усă курать?

а) ăсансене туй вăхăтĕнче браконьерсем килсе ан чăрмантарччăр тесе сыхласа ларть;

ă) туй пынă чух ҫапăҫакан ăҫан аҫисене пере-пере пăрахать;

б) ăсан туйне фотографилесе илет.

«Сунар хуҫалăхĕнче», «Юлашки ҫапăҫу» тата Эпилог.

1. «Тăвар суланчи» текен вырăнта мĕн пулса иртет?

а) икĕ ҫын пăши тирне сĕвеҫҫĕ, браконьерсем Тараева пăшалпа персе амантаҫҫĕ;

ă) Шатра Михалапа Хмельнов пăшисем валли тăвар катăкĕсем хурса тухаҫҫĕ;

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

б) Урнашкинпа Мишер Шатра Михалана хӗнесе пӗтереççӗ.

2. Тараев браконьерсене мӗн çинчен асăрхаттарать?

а) браконьерсем тупăша пӗр пек пайламасан вăл пӗтӗмпех хăйне валли илетӗп тет;

ă) çакăнта мӗн пулнине пӗтӗмпех Чӗкеçе каласа паратăп тет;

б) пурпӗрех ответ тытма тивет, саккунран тарса хăтăлма çук тет.

3. Барановпа Хмельнов хушшинче мӗн пирки хирӗçӳ тухать?

а) Баранов Тараева пенӗшӗн ответ тытасшăн пулманни пирки

ă) Хмельнов тытнă пăшин çурри ытла пайне хăйне валли илесшӗн пулнă пирки;

б) Баранов хай хӗрне Чӗкеçе Хмельнова каччa парсшăн пулнă пирки.

4. Баранов кайнă хыççăн мӗн пулса иртет?

а) Хмельнов Тараева вăрман ăшне шаларах илсе кайсаюр айне пытарать;

ă) пăши тытнă вырăна Чӗкеç килсе çитет;

б) Тараев Хмельнова çӗре ӳкерет, ăна тăнсăр туса аллисене капрон кантрапа каялла туртса çыхать.

5. Тараева çамрăксем мӗнле кӗтсе илеççӗ? Вӗсене вăрманти пăтăрмах пирки кам пӗлтерет?

а) çамрăксем ура! кăшкăрса саламлаççӗ; пăтăрмах Чӗкеç пӗлтерет;

ă) çамрăксем ырă кун пултăр теççӗ; пăтăрмах пирки Урнашкин пӗлтерет;

б) çамрăксем нимле те кӗтсе илмеççӗ, пăтăрмах пирки Тăрна Иванӗ пӗлтерет.

6. Повесть мӗнпе вӗçленет?

а) Тараев сунар станцинчен пăрахса тухса кайнипе;

ă) Чӗкеç ашшӗпе пӗрле чăн-чăн кайăк тăшманӗ пулса тăнипе;

б) хур кайăксем хăйсен чӗлхипе кайăк тусӗсене тав тунипе.

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)